Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

47 (8211) № * Шăмат кун, 2014 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 28-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Июнĕн 27-мĕшĕ – Раççейри çамрăксен кунĕ

## Туслă коллективра




*"Россельхозбанкăн" Чăваш Енри филиалĕн Муркашри хушма офисĕ уçăлнăранпа вăхăт нумаях иртмен-ха, çичĕ çул кăна. Çавăнпах кунта вăй хуракан коллектив та çамрăк. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан (сулахайран сылтăмалла) Амиля Макарова аслă экономистпа Вероника Чернова аслă кассир кунта 2011 çултанпа тăрăшаççĕ, Ирина Терентьева ертсе пыракан экономист вара – 2007 çулта хушма офис уçăлнăранпах.*

*"Коллектив çамрăк та туслă пулни пире ума лартнă тĕллевсене пурнăçласа пыма пулăшать. Пирĕн сотрудниксем клиентсемпе яланах тарават, çавăнпа та эпир ырă ят-сум çĕнсе илме пултартăмăр, çакна май район экономикине аталантарассине пысăк тӳпе хыватпăр. Пирĕн патра вăй хуракан çамрăк специалистсем ответлăхпа палăрса тăраççĕ, хăйсен тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ, ыйтусене кĕске вăхăтрах татса параççĕ. Пурнăçа кĕрсе пыракан çĕнĕлĕхсене хăвăрт алла илни, хăйсен пĕлĕвне аталантарас туртăм пысăк пулни вĕсене банк сотрудникĕн çăмăл мар ĕçĕнче питĕ пулăшать тесе шутлатăп", – çапла палăртать хăйĕн шухăшне хушма офис ертӳçи Ирина Валентиновна Павлова.*

*Çамрăк специалистсем вара "Россельхозбанкра" çамрăк çемьесем, çамрăксем валли меллĕ кредитсем пуррине калаççĕ. Вĕсем пурнăçри ответлă тапхăрта ура çине тăма пулăшнине палăртаççĕ. "Ĕçлеме ӳркенмелле мар кăна", – теççĕ вĕсем.*

***Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.***

### ХАКЛĂ ТУССЕМ!

Сире Çамрăксен кунĕ – çамрăклăх, çутă ĕмĕтсен, иксĕлми вăй-хăват, хăюллă сăнавсен, ĕмĕт вĕçевĕн тата пурнăçри çул шыравĕн уявĕ – ячĕпе чĕререн саламлатăп.

Чăваш Республикин патшалăх политики çамрăксем хăйсен пултарулăхĕпе усă курмалли условисем йĕркелес, çамрăк ăрăвăн талантлă та пуçарулла представителĕсене пулăшас тĕллевлĕ.

Наука, техника, производство, журналистика, литература, культура, искусство, вĕрентӳ, воспитани, çамрăксен политикин, сывлăх сыхлавĕн, çут çанталăка сыхлассин тата спорт сферисенчи çамрăксене пулăшма Чăваш Республикин Çамрăксен патшалăх премийĕсене параççĕ. Юлашки икĕ çулта вĕсен шучĕ тăваттăран саккăр таран ӳсрĕ, лауреатсене паракан тӳлев пилĕк хут пысăкланчĕ – кашни енпе 50 пин тенкĕпе танлашать.

Çуллен вĕренӳре, бизнес-проект тăвассинче, наука, пултарулăх, производство, управлени ĕç-хĕлĕнчи курăмлă кăтартусемпе палăрнă пиншер яшпа хĕр пултарулăхри пысăк ăнтăлушăн стипендие тивĕçет. 2004–2014 çулсенче пĕтĕмпе çавнашкал 11 пин стипенди панă.

Чăваш Ен хăйĕн маттур та пуçарулла, ĕçчен çамрăкĕсемпе тивĕçлипех мăнаçланать. Нумай çамрăк тĕрлĕ ĕç-хĕл сферинче чăн-чăн профессионал пулса тăма ĕлкĕрчĕ. Вĕсем питĕ лайăх девиз шухăшласа кăларнă, эпĕ ăна туллин ырлатăп: "Ăçта эпир – унта çĕнтерӳ!"

Çамрăксене хăйсене шанма, пуçарулла пулма, çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм, ырă мĕн пур пуçарура çитĕнӳ, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

Европа чемпионачĕ

## Тепĕр çул Шупашкарта кĕтетпĕр!

Çак сăмахсемпе вĕçленнĕ Германири Брауншвейг хулинче çăмăл атлетика енĕпе иртнĕ командăсен Европа чемпионачĕ. Ăмăртусен пĕтĕмлетĕвĕпе Раççейĕн пĕрлештернĕ команди пухмача 25 медальпе пуянлатса иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Палăртма кăмăллă: чемпионатра Чăваш Ен чысне шăчăпа сикекен Анжелика Сидорова хӳтĕленĕ. Хăйĕн кăтартăвне çĕнетсе пике ылтăн медаль çĕнсе илнĕ.

Аса илтеретпĕр: командăсен чемпионатне 2009 çултанпа йĕркелеççĕ, унта Европăри чи вăйлă 12 команда хутшăнать. Тепĕр çул сумлă ăмăртăва Шупашкар йышăнĕ. Çавна май Пĕтĕм Раççейри çăмăл атлетика федерацийĕн тĕп секретарĕ Михаил Бутов, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов Германие кайнă. Пирĕн ентешсем унта пулса ăмăртăвăн тĕп хулипе, республикăн спортри çитĕнĕвĕсемпе паллаштарнă. Чемпионат вĕçленнĕ кун Брауншвейг хули Шупашкара Европа атлечĕсен ассоциацийĕн ялавне панă.

**А. МИХАЙЛОВ.**

"Симĕс ĕç çи" – 2013

## Улăх-çаран пушанать

Иртнĕ эрне кун тĕлне районти тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем нумай çул ӳсекен курăксене 2036 гектар (32 процент) çулнă. Ут çи ĕçĕ "Путь Ильича" агрофирмăра, Суворов яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхра, Чкалов яч. хис. тата Чапаев яч. хис. хуçалăхсенче кал-кал пынине палăртмалла. Вĕсемпе пĕрлех А. Мерлов, В. Горбунов, В. Бархаткин тытса пыракан хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ĕçлекенсем те нумай çул ӳсекен курăксен анисенче кунсерен пысăк калăпăшлă ĕç туса пыраççĕ.

## 34 процент утă пур

Ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче – ут çи вăй илнĕ вăхăт. Оперативлă кăтартусене пăхсан çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕ тĕлне çĕр ĕçченĕ район шайĕнче утă хатĕрлемелли плана 34 процент тултарнă. Çак ĕçе Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнче ыттисенчен лайăхрах йĕркеленĕ. Çатракассисемпе Анаткассисем асăннă кун тĕлне утăна 441 тонна (110,3 процент) типĕтсе янтăланă. Ут çи çавăн пекех "Восток", Чкалов яч. хис., Е. Андреев яч. хис., "Свобода" пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе "Путь Ильича" агрофирмăра кал-кал пырать.

## Сенаж хываççĕ

Районĕпе планпа 11850 тонна сенаж хывмалла пулсан, ĕнерхи кун тĕлне "Герой" ял хуçалăх производство кооперативĕпе "Путь Ильича" агрофирмăра çеç çак ĕçе тытăннă. Шурчасем сĕт ферминче асăннă куна 500 тонна (77 процент) сенаж янтăланă. Шаптаксем вара çак хушăра паха апата 450 тонна (10 процент) янтăлама хевте çитернĕ. Çывăх кунсенче ку ĕçсем ытларах вăй илесси, ытти хуçалăхсем те çак ĕçе кӳлĕнесси пирки иккĕленӳ çук.

Хуçалăхсен кăçал çавăн пекех 23650 тонна силос янтăламалла. Ку ĕçе "Ударник" хуçалăхра пуçланă.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

Ял хуçалăх çыравĕ – 2016

## Туллин ĕçлессишĕн

Раççейри ĕç тăвакан тата Чăваш Республикин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен пĕрлехи тĕллевĕсене йĕркелессипе тата 2016 çулхи ял хуçалăх çыравне йĕркеллĕ кĕтсе илессипе тухса тăракан ыйтусене оперативлă татса парассипе ĕçлеме Чăваш Республикин территорийĕнче ведомство комиссийĕ туса хунă. Ăна ертсе пыма Чăвашстат ертӳçине Эльвира Максимовăна çирĕплетнĕ.

2014 – 2018 çулсем валли йышăннă ĕç планĕпе килĕшӳллĕн 2016 çулхи ял хуçалăх çыравне ирттересси пирки ĕçсем пуçланнă. Вĕсен шутĕнче ял хуçалăх объекчĕсен списокне хатĕрлесси, картографи ĕçне йĕркелесси, çырав ирттерме муниципалитетсенче комиссисем йĕркелесси, Чăвашстат çумĕнче штатра тăман служба тăвасси т. ыт. те.

Çырав çĕр тата ĕç ресурсĕсем, ака лаптăкĕсем, выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк йышĕ, ял хуçалăх продукцийĕн таварлăхĕ пирки тулли хурав парĕ.

2006 çулхи ял хуçалăх çыравĕн пĕтĕмлетĕвĕпе Чăваш Республикинче 1101 ял хуçалăх организацийĕ, 2064 хресчен (фермер) хуçалăхĕ, 272081 килти хушма хуçалăх, 733 садпа пахча юлташлăхĕ пулни паллă.

Йĕркелӳçĕсем 2016 çулхи ял хуçалăх çыравĕ Раççейре тата Чăваш Республикинче пурăнакан кашни çыншăнах пĕлтерĕшлĕ пулнине çынсем ăнланса туллин пулăшасса шанаççĕ.

**Хамăр инф.**

Кану

## 11 кун канăпăр

ИТАР-ТАСС агентстви пĕлтернĕ тăрăх Раççейри социаллă тата ĕç хутшăнăвĕсене йĕркелекен виçĕ енлĕ комисси РФ Правительствин 2015 çулхи Çĕнĕ çулти 11 каникул кунĕллĕ йышăнăвĕн проектне ырланă.

Раççей Федерацийĕн ĕç тата социаллă хӳтлĕх министрĕн çумĕ Любовь Ельцова пĕлтернĕ тăрăх Çĕнĕ çулти кану кунĕсене йĕркеленĕ май январĕн 3-мĕшĕнчи шăмат куна январĕн 9-мĕшĕнчи эрне куна, январĕн 4-мĕшĕнчи вырсарни куна майăн 4-мĕшĕнчи тунти куна куçарĕç.

Çапла вара çитес çул январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 11-мĕшĕччен, çавăн пекех февралĕн 21 – 23-мĕшĕсенче, мартăн 7 – 9-мĕшĕсенче, майăн 1 – 4-мĕшĕсенче тата 9 – 11-мĕшĕсенче, июнĕн 12-мĕшĕнче тата ноябрĕн 4-мĕшĕнче канмалла пулать.

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Юратнă аннене, асаннене, хунямана – Кĕçĕн Чураш ялĕнче пурăнакан **Василиса Степановна МИХАЙЛОВĂНА** 80 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăй-хал, тату пурнăç, тумхахсăр кун-çул сунатпăр. Телейпе ăнăçу яланах санпа пĕрле пулччăр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр. Татах та нумай-нумай çул пурăнма Турри чир-чĕртен сыхлатăр, вăй-хал, телей, пархатар парнелетĕр. Тавах сана, аннеçĕм, пире юратса ӳстернĕшĕн, йывăр самантсенче пулăшса тăнăшăн, пурнăç çине тăхма пулăшнăшăн.

**Салампа: ачисем, кĕрӳшĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**

Çырăнтару – 2014

## Хаклă вулаканăм!

**Эсĕ "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçата июльтен илсе тăма çырăнма ĕлкĕреймен пулсан, августран тытăнса илсе тăма çырăнма пултаратăн. Малашне те пĕрле пулар.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

Туслăх кĕперĕ

# Китайран делегаци килсе кайрĕ, хальхинче – Гуйчжоу провинцийĕнчен

Районта юлашки çулсенче туризма аталантарас ыйтăва пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Нумаях пулмасть Китай халăх Респубикин Аньхой провинцийĕнчен пирĕн района çуркунне ку ыйтупа делегаци те килсе кайрĕ. Ильинка ял тăрăхĕнче туризма аталантарас ыйтупа республика шайĕнчи канашлу пулчĕ. "Районта туризма аталантармалли ятарлă программа хатĕрлесе кăçал пирĕн республикăри "Этническая Чувашия" программăна кĕрсе юлмалла", –терĕ висĕм кун районти бизнес-инкубаторта предпринимательсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен республикăри уполномоченнăйпа Владимир Ивановпа тата районти предпринимательсемпе ирттернĕ тĕл пулура район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев. Ростислав Николаевич предпринимательсенчен Ильинка тăрăхĕнче туризма аталантарассипе сĕнӳсем кĕтни çинчен каларĕ.



Республика кунĕ умĕн вара пирĕн районта Китай Халăх Республикинченех тепĕр делегаци пулчĕ. Хальхинче Гуйчжоу провинцийĕнчен. "Туслă пурăнас тесен нимĕн те кансĕрлемест, пĕр-пĕринчен пиншер километр катара вырнаçни те", – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев Гуйчжоу провинцийĕн ют çĕр-шыв ыйтăвĕсемпе ĕçлекен канцелярийĕн пуçлăхĕн çумне, чикĕ леш енчи халăхсен туслăхĕн обществин вице-президентне Ван Яна Мăн Сĕнтĕрти информаципе культура центрĕнче пулса иртнĕ концерт хыççăн. Тĕл пулура туслă хутшăнусен ыйтăвĕсене те сӳтсе яврĕç.

Республика кунне Пĕтĕм Раççейри "Раççей çăл куçĕсем" ятпа иртекен XXII фестивале килнĕ хăнасем пирĕн районта та хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

"Чăваш Республикинче, Муркаш районĕнче эпир пĕрремĕш хут. Кунта вырăнĕсем те илемлĕ. Çыннисем тата епле ырă кăмăллă та таравват. Паян пĕрле ирттернĕ каçа та эпир манмастпăр. Тавах пире çапла ырă сунса кĕтсе илнĕшĕн"– терĕ Ван Ян.

Тĕл пулу вара, чăннипех те, питĕ интереслĕ иртрĕ. Куракансем те, артистсем те вăхăт иртнине те сисмерĕç.

Чи малтан хăнасем хăйсен çĕр-шывĕпе паллаштаракан кинофильма кăтартрĕç. Муркаш районĕнче пурăнакансем çапла майпа Китая "çитсе килчĕç". Унти çӳллĕ тусемпе шăнкăр-шăнкăр шыв сасси вара артистен юрри-ташшисенче те таталма пĕлмерĕ. Çав илемлĕ юрăкĕвĕпе çĕр чăмăрĕ çинче çывăххах мар вырнаçнă чăвашсемпе Китай çыннисем пĕр-пĕрне çывăх тăвансем пекех туйрĕç. Мĕншĕн тесен çак икĕ халăх çынни пĕр çĕр чăмăрĕ çинче пурăнать. Пире те, вĕсене те пурăнма юрату, туслăх, чун илемĕ хавхалантарать, вăй парать. Çыннисем расна пулсан та, туйăмĕсем пĕрре – юрату юрлаттарать те куççуле те кăларать. Çакна туйрĕç куракансем хăнасем шăрантаракан юрату юррисенче те.

Хăйсем вĕри чунлă халăх пулни те "тапсах" тăчĕ юрăташăсенче. Унта арçынсем сăрт-ту шутланаççĕ, хĕрарăмсем вара – шыв, хĕрсем – çав шывăн чунĕсем. Вăт мĕнле юмахри сăнарсем пекех вырăн тупнă вĕсем çут çанталăкра та.

Пĕр-пĕрне хисеплесен, чун пĕр-пĕрин патне туртсан вара чĕлхене пĕлменни те чăрмав мар. Кăмăл пулсан ăна вĕренме пулать. Юй Дашэн Мăн Сĕнтĕрти йывăç çулçипе вĕрсе "Катюша" кĕввине калама пуçласан пĕтĕм зал пĕрле юрларĕ. Унтан вăл вĕрсе каламалли инструментпа пирĕн "Подмосковные вечера" юрă кĕввине калама пуçласан та куракансем чăтаймарĕç – пĕрле юрласа ячĕç.

Мăн Сĕнтĕр сцени çине тухнă коллективăн стажĕ пысăк, 1953 çулта йĕркеленнĕ. Паян унта 166 актер. Гуйчжоу провинцийĕнче тĕрлĕ наци çынни пурăнать, çавăнпа та артистсен репертуарĕнчи произведенисем те пурнăç çинчен тата тĕрлĕ наци çыннин (Мао, Тун, Буи, И, Гэлао) йăлине сăнласа параççĕ. Коллектив 40 çĕр-шывра пулнă, çав шутра – Раççейре те.

Хăйсен юрри-ташшипе куракансен туслăх варкăшне парнелерĕ Китай делегацийĕ. Мĕншĕн тесен пĕр-пĕрипе туслă пурăннине нимĕн те çитмест. Тăвăллăн алă çупса саламларĕç куракансем хăнасене. "Фэйчан ганьсе", – тесе тав турĕ район администрацийĕн культура, архив ĕçĕсен пай пуçлăхĕ Елена Чернова хăнасене сцена çинче. "Пысăк тав" тени пулчĕ ку. Залран та çав сăмахсемпе тав турĕç, анчах вырăсла.

Пĕр-пĕрне килĕштерсен чĕлхене часах вĕренме пулать иккен.

"Тсайте", – тесе сыв пуллашрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ хăнасемпе. "Тепре тĕл пуличчен" тени пулать ку чăвашла. "До свидания" терĕ Ван Ян та.

Туризма аталантарма шутларăмăр пулсан, тĕл пулусем Культура çулталăкĕнче те, малалла та татах пулĕç-ха.

**Л. ПАВЛОВА.**

Ĕçпе тивĕçтерекен центрта

# Пулăшу: çамрăксене те, аслисене те

Муркашри халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр тĕрлĕ ӳсĕмри, тĕрлĕ категорие кĕрекен граждансене нумай енлĕ пулăшу парать, çавăнпах унăн ĕç-хĕлĕ тĕрлĕ енлĕ.

Хальхи вăхăтра ĕç рынокĕнче маларах илнĕ професси вырăнне тепĕр професси илесси аталаннă. Çакна пурнăçри улшăнусем хистеççĕ. Ку тĕлĕшпе вара шăпах ĕçпе тивĕçтерекен центр нумай тимлет.

Акă ачи висĕ çул тултариччен ăна пăхма илнĕ отпуск вăхăтĕнче амăшĕсем профессие илме, урăх профессие вĕренме е квалификацие ӳстерме пултараççĕ. Вĕренӳ тӳлевсĕр тата çак пулăшупа палăртнă йĕркепе ĕççĕррисен учетне илменнисем те усă курма пултараççĕ. Çакă отпуск хыççăн ĕçлеме тытăнас текен амăшĕсемшĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.

Центр ертӳçи Ираида Димитриева пĕлтернĕ тăрăх çитес вăхăтра "Продавец продовольственных товаров", "Оператор АСБУ "1С: Предприятие 8.2", "Маникюрша" тата ытти специальноçпа вĕренме каяс текенсен лайăх май пур. Ĕмĕте пурнăçлас тесен ĕçпе тивĕçтерекен центра каймалла кăна (Муркаш, Мир урамĕ, 6 çурт, 329 пӳлĕм, тел.: 62-1-66). Вĕреннĕ вăхăтра стипенди тӳлеççĕ, çул укçине те саплаштараççĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен центр пулăшнипе çамрăксем кăна мар, аслă ӳсĕмрисен те вĕренме пултараççĕ. Сăмахран, пенсие тухнă (выслугăпа мар), çапах та кăçал ĕçлеме тытăнас шухăшлă çынсен те вĕренме май пур. Вĕсене хальхи вăхтра ĕç рынокĕнче ыйтакан профессие алла илме пулăшаççĕ. Вĕренесси, пурăнасси тата çул укçи ĕçпе тивĕçтерекен центр шучĕпе пулса пырать.

Çĕнĕлĕхе алла илме, апла пулсан ĕçпе тивĕçтерекен центра çитме васкăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Объявление

**АУ ЧР СПО "Ядринский агротехнический техникум" объявляет прием студентов на 2014–2015 учебный год**

**Механизация сельского хозяйства – 3 г. 10 мес. на базе 9 кл.**
**Тракторист-машинист сельскохозяйственного производства – 2 г. 5 мес. на базе 9 кл.**
**Автомеханик – 2 г. 5 мес. на базе 9 кл.**
**Автомеханик – 10 мес. на базе 11 кл.**
**Повар, кондитер – 2 г. 5 мес. на базе 9 кл.**
**Каменщик, штукатур – 10 мес. на базе 9 кл (коррекционная группа).**
**Прием документов до 15 августа 2014 года (при наличии свободных мест до 1 октября).**
**Необходимые документы для поступления в техникум:**
**1. Заявление.**
**2. Документ об образовании (подлинник и ксерокопия).**
**3. 4 фотографии размером 3х4.**
**4. Копия паспорта.**
**5. Медицинская справка формы 086-У. Сертификат прививок. Медицинская карта.**
**429060, Чувашская Республика, г. Ядрин, ул. 50 лет Октября, д. 71"г". Тел.: 8(83547)2-23-44; факс 8(83547) 2-23-44; e-mail: yad_pl-25@chtts.ru**
**Сайт техникума: http://www.licey25yadrin.ru**

Официально

**ЗАКЛЮЧЕНИЕ**
**публичных слушаний по внесению изменений в Правила землепользования и застройки Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

**Место проведения слушаний:**
В здании администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по адресу: деревня Кораккасы, ул. Новая, дом 1.
**Время:** 10-00 часов московского времени.
**Председатель слушаний:** Лебедев Геннадий Герасимович.
**Участники публичных слушаний:**
В публичных слушаниях приняли участие 10 человек (список прилагается).
**Предмет слушаний:** рассмотрение предложений о внесении изменений в Правила землепользования и застройки Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, в части изменения градостроительного регламента части территориальной зоны СХ-1 на территориальную зону СХ-3 в отношении земельных участков с кадастровыми номерами 21:17:072501:1429, 21:17:072501:1430, 21:17:072501:1431, 21:17:072501:1437, 21:17:072501:1439, 21:17:072501:1447, 21:17:072501:1448, 21:17:072501:1458, 21:17:072501:1718, 21:17:072501:1719, 21:17:072501:1720, 21:17:072501:1721, 21:17:072501:1722, 21:17:072501:1723, 21:17:072501:1724, 21:17:072501:1725, 21:17:072501:1726, 21:17:072501:1727, 21:17:072501:1728, 21:17:072501:1729, 21:17:072501:1459, 21:17:072501:1460, 21:17:072501:1461, 21:17:072501:1432, 21:17:072501:1433, 21:17:072501:1434, 21:17:072501:1435, 21:17:072501:1436, 21:17:072501:1438, 21:17:072501:1440, 21:17:072501:1441, 21:17:072501:1442, 21:17:072501:1443, 21:17:072501:1444, 21:17:072501:1445, 21:17:072501:1446, 21:17:072501:1449, 21:17:072501:1450, 21:17:072501:1451, 21:17:072501:1452, 21:17:072501:1453, 21:17:072501:1454, 21:17:072501:1455, 21:17:072501:1456, 21:17:072501:1457, 21:17:072501:1463, 21:17:072501:1412, 21:17:072501:1413, 21:17:072501:1414, 21:17:072501:1415, 21:17:072501:1416, 21:17:072501:1417, 21:17:072501:1418, 21:17:072501:1419, 21:17:072501:1420, 21:17:072501:1421, 21:17:072501:1422, 21:17:072501:1423, 21:17:072501:1424, 21:17:072501:1425, 21:17:072501:1426, 21:17:072501:1427, 21:17:072501:1428, 21:17:072501:1679.
**Повестка дня:**
1. Выступление председателя публичных слушаний Лебедева Г.Г.
2. Рассмотрение вопросов и предложений участников публичных слушаний.

По повестке дня выступил докладчик – председатель публичных слушаний глава Кадикасинского сельского поселения Лебедев Г.Г., сообщивший, что публичные слушания проводятся на основании постановления главы Кадикасинского сельского поселения, опубликованного в газете "Çĕнтерӳ ялавĕ", от 24 мая 2014 года №38(8202) на основании статей Градостроительного кодекса РФ и Федерального закона №131-ФЗ, относительно внесении изменений в Правила землепользования и застройки Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, в части изменения градостроительного регламента части территориальной зоны СХ-1 на территориальную зону СХ-3 в отношении земельных участков с кадастровыми номерами 21:17:072501:1429, 21:17:072501:1430, 21:17:072501:1431, 21:17:072501:1437, 21:17:072501:1439, 21:17:072501:1447, 21:17:072501:1448, 21:17:072501:1458, 21:17:072501:1718, 21:17:072501:1719, 21:17:072501:1720, 21:17:072501:1721, 21:17:072501:1722, 21:17:072501:1723, 21:17:072501:1724, 21:17:072501:1725, 21:17:072501:1726, 21:17:072501:1727, 21:17:072501:1728, 21:17:072501:1729, 21:17:072501:1459, 21:17:072501:1460, 21:17:072501:1461, 21:17:072501:1432, 21:17:072501:1433, 21:17:072501:1434, 21:17:072501:1435, 21:17:072501:1436, 21:17:072501:1438, 21:17:072501:1440, 21:17:072501:1441, 21:17:072501:1442, 21:17:072501:1443, 21:17:072501:1444, 21:17:072501:1445, 21:17:072501:1446, 21:17:072501:1449, 21:17:072501:1450, 21:17:072501:1451, 21:17:072501:1452, 21:17:072501:1453, 21:17:072501:1454, 21:17:072501:1455, 21:17:072501:1456, 21:17:072501:1457, 21:17:072501:1463, 21:17:072501:1412, 21:17:072501:1413, 21:17:072501:1414, 21:17:072501:1415, 21:17:072501:1416, 21:17:072501:1417, 21:17:072501:1418, 21:17:072501:1419, 21:17:072501:1420, 21:17:072501:1421, 21:17:072501:1422, 21:17:072501:1423, 21:17:072501:1424, 21:17:072501:1425, 21:17:072501:1426, 21:17:072501:1427, 21:17:072501:1428, 21:17:072501:1679.

Председатель публичных слушаний предложил порядок проведения публичных слушаний.

**Рассмотрение вопросов и предложений участников публичных слушаний.**
По предложенному порядку проведения публичных слушаний – замечаний и предложений от участников слушаний не поступило.

Участники публичных слушаний предложений и замечаний, касающихся предложенных изменений Правил землепользования и застройки для включений их в протокол, не выразили.

**Итоги публичных слушаний:**
Публичные слушания по внесении изменений в Правила землепользования и застройки Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, в части изменения градостроительного регламента части территориальной зоны СХ-1 на территориальную зону СХ-3 **считать состоявшимися**.

По результатам публичных слушаний главе Кадикасинского сельского поселения Лебедеву Г.Г. было рекомендовано принять решение о согласии с Проектом землепользования и застройки Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики в новой редакции и направление его в Собрание депутатов Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

Протокол публичных слушаний по рассмотрению внесений изменений в Правила землепользования и застройки Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, в части изменения градостроительного регламента части территориальной зоны СХ-1 на территориальную зону СХ-3, опубликовать в газете "Çĕнтерӳ ялавĕ" и разместить на официальном сайте Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

**Председатель публичных слушаний ЛЕБЕДЕВ Г.Г.**

# Пулăхлăха упрасси пысăк пĕлтерĕшлĕ

Сăмах - специалиста

Хресчен мĕн ĕлĕкрен çĕре унăн пулăхлăхĕшĕн хакланă. Шăпах вăл тухăç мĕнле пулассине витĕм кӳрет-çке. Тăпра вăл – хăйĕн саккунĕсемпе пурăнакан тата аталанакан тытăм тесен те йăнăш пулмĕ. Тыр-пул, пахча çимĕç, йывăç-тĕм лайăх ӳссен çĕр пулăхлăхĕнче иккĕленӳ çуралас çук. Анчах та тăпрара пĕр-пĕр пулăм е япала япăхлансанах ырă мар улшăнусен черечĕ пуçланнине пула вăл пахалăхне çухатнине кашниех ăнланать пулĕ тетĕп. Çапах лайăх сийпе тимлĕ пуласси пирки манаççĕ çав нумайăшĕ. Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн ĕçченĕсен кашни çулах ку енпе йĕркене пăснă тĕслĕхсене "тăрă шыв çине кăлараççĕ".

Çакăншăн РФ КоАП-ĕн 8.6 статйин 1 пайĕпе айăплаççĕ. Пĕлтĕр 11 çĕр лаптăкĕ тĕлĕшпе асăннă статьяна "хута яма" тивнĕ. Пĕтĕмпе инспекторсем 6,7 гектар çĕр шар курнине тупса палăртнă.

Палăртмалла, районсен администрацийĕсем те çакнашкал пулăмсем пирки управление пĕлтереççĕ. Пĕлтĕр, сăмахран, 8 районтан килнĕ 30 çырăва тишкернĕ. Çав шутра çынсем хăйсем тĕллĕн çĕрĕн çиелти сийне хырса илни пирки 9-ĕшĕнче çырса кăтартнă.

Пĕтĕмпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем пĕлтернĕ тăрăх ирттернĕ тĕрĕслевсен кăтартăвĕсем юридици вăйĕнчи 6, должноçри 5 çынна тата 18 гражданина административлă майпа явап тыттарма хистенĕ. Çав шутра – паха çĕр сийне сая янишĕн те.

Кунашкал киревсĕрлĕхе Шупашкар, Çĕрпӳ, Хĕрлĕ Чутай, Елчĕк, Вăрнар, Улатăр, Муркаш районĕсенче палăртнă.

Акă Вăрнар районĕнчи Пăртас ялĕнчи пĕр хĕрарăм ял хуçалăх продукцийĕ туса илмешкĕн 47,065 гектар çĕр арендăна илнĕ. Анчах та çак лаптăкри пĕр лапам (0,0562 гектар) тĕлĕшпе инспекторсен ыйтусем сиксе тухнă. Ара унта пĕве тума пуçланă. Çавна май тарăн шăтăках куç умне тухса тăнă. Паллă ĕнтĕ, пахă сий "шăрши" те юлман унта. Çак ĕçе пуçарма ирĕк паракан документсем пулманни – пĕр ыйту. Ку тĕслĕхре рекультиваци ĕçĕсем пирки калаçни те вырăнсăр пулĕ, унта проект та хатĕрлемен.

Çĕмĕрле районĕнче вара хăйăр кăларасшăн пулнипе 0,22 гектар çинчи пулăхлă тăпра шар курнă. Çакăншăн явапллă ĕçлевсене 22 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Муркаш районĕнчи Ильинка ял тăрăхĕн территорийĕнче те хăйăр кăларма тытăннă пĕр общество паха çĕр сийне упраса хăварас тесе тăрăшман. Çĕре пăсни пирки управление уйрăм çын пĕлтернĕ. Унта та обществăн çĕр ĕçĕсем ирттерме ирĕк паракан документсем пулман. Ку хутĕнче те – 22 пин тенкĕлĕх штраф.

Елчĕк районĕнчи Кушкă арçынни те строительствăн çак материалне 3 тоннăна яхăн кăларнă май çĕрĕн çиелти пайне хырса илнĕ. Унăн та штраф тӳлемелле тата çав лаптăка усă курма юрăхлă тумалла.

Улатăр районĕнчи Алтышево ял тăрăхĕнче те çакнашкал ӳкерчĕк тухса тăнă. Кунта хăть пулăхлă çĕр сийне (380 кубла метр) хăйăр кăларнă вырăнта юнашар купаласа хунă. Шăтăкĕ вара 1,5–2 метр тарăнăшех пулнă. 0,19 гектара шар кăтартнă çын явапланăхран, паллах, хăтăлайман.

Çул-йĕр тăвакан тата юсакан пĕр предприятин ĕçне вара пĕрре кăна мар тĕпчеме тивнине палăртаççĕ инспекторсем. "Ĕçне" терĕм-ха та, кунта пулăхлă çĕр сийне вырăнтан куçарни пирки сăмах пынине палăртса хăварам. Шупашкар районĕнче, сăмахран, вĕсем 25 тăваткал метр чухлĕ лаптăка чавса пĕтернĕ. Иртнĕ çулсенче общество ĕç-хĕлне пула Муркаш, Вăрнар районĕсенчи ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсем вакланнă.

Каламалла, инспекторсен асăрхаттарăвĕсене пĕтерме тăрăшаççĕ общество ĕçченĕсем. Шанас килет, çакăнта штрафсем кăна мар, пулăхлă çĕр сийне пăсни çĕрсен ял хуçалăх пахалăхне чакарнине ăнланни витĕм кӳнĕ. Пулăхлăха тавăрасси вара – питĕ тăкаклă та кăткăс ĕç. Ăна вăхăтра пурнăçламанран паллă пусă çавранăшĕнчен кăларма пултарас хăрушлăх тухса тăрать-çке.

**Н. ВАСИЛЬЕВА,**
**управлени ĕçченĕ.**

# Çын хыçĕнче пурăнман

## Республика кунне уявланă май



Пурнăçра малашлăха пăхакан тăтă-шах иртнине тишкерет, пурнăçланă ĕçсене вăхăтра пĕтĕмлетет. Кун пек чухне ĕнер пурнăçланă ырă ĕçсемех вăхăт иртнĕçемĕн пурнăç хумĕ айне пулса историе юлнине асăрхатăн. Вĕсенче вара паянхи ăнăçусен ырă никĕсĕ, малашлăх утăмĕсен тулăх вăрлăхĕ пулнине те асăрхать пурнăç çынни. Мĕншĕн тесен çак çул ăна малалла аталанса экономикăра çĕнĕ ӳсĕмсен чиккине çĕнме пулăшать. Çакăн çинчен калаçаççĕ те ĕнтĕ вырăнти пуçлăхсемпе тĕл пулсан хăйсен вăхăтĕнче ĕçри хастарлăхпа палăрнă ветерансем.

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Александр Кондратьев – пуян историллĕ, тăрăшуллă та ĕçчен районăмăрăн пĕр пайĕ. Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Николай Беловпа калаçнă чух унăн сăмахне итлесен, пĕр пай пулсан та, Александр Кондратьевич çирĕп пай пулни палăрчĕ, унăн кун-çулĕ ума тухрĕ. Çапла пĕтĕмлетни – малаллахи сăмахăмăн никĕсĕ. Кунта сывă пурнăç йĕрки те, вăрăм пурнăç тилхепи те, çĕр ĕçĕн тарăн тымарлă юратăвĕ те, халăх пурнăçĕпе пурăнни те.

Чуманкасси ялĕнче 4 ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ Санька пиччен ачалăхĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи кĕрленĕ вăхăтра пуçланнă та (1941 çулхи раштавăн 1-мĕшĕнче çуралнă) – хăвăрах ăнлантăр – халăхăмăршăн чи йывăр тапхăрта иртнĕ. Вĕлтĕренпе серте-пултăрантан пĕçернĕ яшка, çĕрĕк çĕр улми крахмалĕнчен хатĕрленĕ кĕселрен пахарах апат курман арçын ача ыррине шанса ĕмĕр тăршшĕпех малалла туртăннă, çĕнĕ пурнăç ырлăхне вĕреннĕ, ыттисенчен те çавнах ыйтнă.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин фронтĕнчен таврăннă ашшĕ – Кондратий Игнатьевич Игнатьев – хăйне вĕренсе пĕлӳ илме ыйтни тата малашлăх техникăра пулни пирки ăнлантарни ял ачин ăсĕнче çирĕп йĕр пулса юлнă. Чуманкассинчи 7 класлă шкултан вĕренсе тухсан Санька ашшĕн сĕнĕвне шута илсе Етĕрнери механизаци шкулне вĕренме каять. Çак çулсенче çĕр-шывра çерем çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртес тапхăр вăй илет. Яшсемпе хĕрсем пурнăç условийĕсене тиркемесĕрех çĕр-шыв чĕннине пурнăçлама васкаççĕ. Пиншер çамрăкран юлмасăр Санька та вĕреннĕ вăхăтрах практикăра Казахстанри пиншер гектар çерем çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртме хутшăнать, техникăпа ĕçлес ĕçре малтанхи опытне пухать.

Пурнăç уçса панă нихăш çула та ку манăн мар тесе айккалла сирсе çăмăллăх шыраса тăмасть Чуманкасси ачи. Хушнă кашни ĕçрех яваплăха туйнипе палăрса тăнă вăл. Ыттисем те çакна ăнланнă, унăн тăрăшулăхне курнă, ун пек пулма тăрăшнă. Çапла вара çамрăк çулсенче А. Кондратьевăн комсомол путевкипе милицире ĕçлеме те тӳр килнĕ. Анчах, ăçта вăй хурсан та, ял ачине тăван çĕр хăй патнех туртнă. Милицире ĕçленĕ хыççăн пирĕн ентеш ашшĕн сăмахне шута хурса пĕлĕве ӳстерме Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумне вĕренме кĕрет. Куçăмсăр вĕренсе инженер-механик дипломне алла илет.

– Ĕçлемелле, умри ĕçе чуна парса пурнăçламалла, юратса тунă ĕç ĕмĕре тăсать, çамрăклăха упрать, ят-сума хушать. Ĕçленипе пĕрлех эрех-сăраран аякра тăни те пирĕн пурнăçăмăрта яшлăха тăснин тĕп вăрттăнлăхĕ пулчĕ-тăр, – калаçма ӳркенмест çĕр ĕçне чунĕпе парăннă ĕç ветеранĕ.

Вырăс чĕлхине тата литературине вĕрентекен Людмила Герасимовнăпа 1966 çулта çемье çавăрса тăрăшуллă мăшăр ĕç ĕмĕрне килĕшӳпе çураçура иртгернĕ. Тĕрлĕ çулта хуçалăхра та, Муркашри "Ял хуçалăх техники" пĕрлешӳре те инженерта вăй хунă арçынна ĕçлес пултарулăхне кура 1985 çулта Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăха ертсе пыма шанаççĕ. Хуçалăх ĕçченĕсен шанăçне тӳрре кăларса, çĕнĕлĕхсене çул парса, ял çыннисен пурнăçне лайăхлатас ĕмĕтпе 6 çул ертсе пырать вăл тăван хуçалăха. Шăпах çак тапхăрта кунти ялсене çут çанталăк газĕ çитет. А. Кондратьев ертсе пыракан хуçалăх ялсене çут çанталăк газĕ кĕртессипе пысăк ĕç туса ирттерет.

– Ĕçе чунпа парăнсан ĕçлемелли нумай, çавăнпа хамăн пурнăçра йăлтах туса çитерейменĕм пулĕ, анчах хама шаннă ĕçе пĕтĕмпех вĕçне çитиех пурнăçлама пултарнишĕн паян хĕпĕртетĕп. Тавах мăшăрăма. Вăл ĕçе тиркеменни, сĕнӳсемпе пулăшни, йывăр вăхăтра тĕкĕ пулни мана тăтăш хавхалантаратчĕ. Пирĕн çемьере эрех ĕçсе ĕçе тухманни, вăл е ку ĕçе тиркесе айккинелле пăрăнни пулман. Килĕштерсе пурăннă. Çавăнпа умри йывăрлăхсене те çăмăллăнах çĕнтернĕ. Иртен пуçласа каçчен ĕçлесе çуккине туйман. "Çук" тесе ĕç пăрахса ларман, – терĕ калаçăва вĕçленĕ май Александр Кондратьевич Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Белов хăйĕнпе пĕр шухăшлă пулнине палăртса **(сăн ӳкерчĕкре)**.

Çĕнелсе пыракан ялсен сăн-сăпатне çителĕклĕ тӳпе хывнă, пурнăçа ял ĕçĕнче тата халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕнче пĕр кун юлмасăр ĕçлесе иртгернĕ ветерансем – район историйĕн уйрăлми пайĕ. Вĕсен ĕçĕпе иртни манăçмасть, истори малалла çырăнать, районпа республика мал туртăмлă аталанать.

**А. БЕЛОВ.**


## Объявления

**ЧЕБОКСАРСКИЙ ПОЛИТЕХНИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ**
**МОСКОВСКОГО ГОСУДАРСТВЕННОГО МАШИНОСТРОИТЕЛЬНОГО УНИВЕРСИТЕТА**

ПОЛИТЕХНИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ ЧЕБОКСАРЫ УНИВЕРСИТЕТ МАШИНОСТРОЕНИЯ

Ведет подготовку по следующим направлениям и специальностям:

- **Юриспруденция** (очная, заочная).
- **Экономика** (очная, вечерняя, заочная).
- **Менеджмент** (очная, заочная).
- **Металлургия** (заочная).
- **Конструкторско-технологическое обеспечение**
- **машиностроительных производств** (заочная).
- **Эксплуатация транспортно-технологических машин**
- **и комплексов** (очная, заочная).
- **Электроэнергетика и электротехника** (очная, заочная).
- **Управление в технических системах** (очная, заочная).
- **Информатика и вычислительная техника** (очная, заочная).
- **Строительство** (очная, заочная).
- **Наземные транспортно-технологические средства** (очная, заочная, с присвоением квалификации «инженер»).
- **Строительство уникальных зданий и сооружений** (очная, заочная, с присвоением квалификации «инженер»).

**СПЕШИТЕ: ЕСТЬ БЮДЖЕТНЫЕ МЕСТА!**

Заявления принимаются:
**до 25 июля** — на очную форму обучения, **до 31 июля** — на заочную.
Мы ждем вас по адресу: **Чебоксары, ул. Карла Маркса, 54.**
Сайт **polytech21.ru,** тел. **63-40-01.**

**ПОЛИТЕХ ПРИНОСИТ УСПЕХ!**

Лиц. № 0997 от 21.04.2014 г.

**Продаю пиломатериалы, срубы 3м.х3м., 6м.х6м. в наличии и на заказ.**
**Тел.: 8-987-579-85-90, 8-908-840-00-33. 3-5.**

* * *

**Ятман ялĕнче 60 сот. çинчи çулман утă е тюкласа та сутатпăр. Тел.: 8-937-399-10-79.**

* * *

**Продаю: песок, щебень, гравмассу. Доставка. Тел.: 8-927-857-70-64. 1-2.**

* * *

**Продается двухкомнатная квартира в новом доме площадью 64 $м^2$, 3 этаж, имеется домофон, 2 застекленных балкона, индивидуальное отопление, со свидетельством, в беловой отделке. Адрес: с. Моргауши, ул. Парковая, д. 8. Тел.: 8-927-667-29-10.**

* * *


**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:080901:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Карпова Валентина Георгиевна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Чаганары, д. 18.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:080901:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

## ОАО «ГАЗПРОМ» ФИЛИАЛ ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород»

# ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ

**УВЕДОМЛЕНИЕ**

ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ УВЕДОМЛЯЕТ юридических и физических лиц, владеющих и обрабатывающих землю или (и) производящих работы в Моргаушском районе Чувашской Республики, что на территории Моргаушского района находятся магистральные газопроводы (МГ) и газопроводы-отводы (далее по тексту – газопроводы), эксплуатируемые под рабочим давлением до 75 кг/см2. Глубина залегания газопроводов (от верхней поверхности трубопроводов) составляет не менее 0,8 метров.

